Хакĕ 25 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# КАПКĂН

№ 10 октяб. 1934 ç.




Совет союзĕнчи Октябĕр демонстраци çинчен хăй майлă ăнлантаракан фашист

— А-а, Гитлĕр вăл — Гитлĕр! Ăна Мускавра та ала çинче йăтса çӳреççĕ.

# Чавса çывăхра та, анчах çыртса илеймĕн

Инкек вăл хăй килесси çинчен хыпар йарса пĕлтермест. Инкек вăл кученеçпе килсе ăш канизчен каларçса савăнтарса хăвармаст. Инкек вăл мăшăр шăнкрав çакса есĕ сисмеле йантратса килмест. Инкек вăл кăшманран та йÿçĕ тăшман. Вăл вăрттăн йăпшăнса пырса хăр! хам! тесе çыртать те, ĕмĕрлĕх суран хăварать.

— Ай-уй, ара, мĕн кирлĕ марра калаçса тăратăн, Макара инкек синкек çакланати! Курмастăни есĕ унăн пурнăçне, кил-хушшийĕ арча пек, пÿрчĕсем шкул пек. Лашисем каска пек. Ывăлĕ-хĕрĕсем самăртнă пек сарăлса çÿреççĕ, такама тытсан та авса тăкмала,—шăнкăравла саспа хирĕçлерĕ йалсовет председателне Хĕветĕр арăмĕ Сăпани.

— Çапли çаплах та-ха, анчах налога, страховкăна тата ытти укçасене те вăхăтра парса татни хăна-ху инкек-синкекрен страхласа хуни çех-хавĕт вăл,—терĕ председатĕл.

— Нихçан та сийен курмасть пулĕ ун пек çын,—хушса хучĕ Сăпани.

— Пурнăç вăл пĕр пек килмест, Сăпани акн, пурнăçшăн пĕрлешсе хайаррăн кĕрешмеле. Пĕччен-пĕччен харпăр çĕрлĕ кĕрешни вăл сахал усăлă. Епĕ те пĕлетĕп Макарăн ывăлĕсем маттур. Çавсем çине шансах вăл колхоза та кĕмерĕ. Анчах ывăлĕсем килйыша тăрантарас тесе йытă чуппипе чупаççĕ. Пурнăç тутинчен тарса çÿреççĕ. Ей, Макар пиче, кил-ха кунта, кăшкăрчĕ урамра пуплесе тăнă вăхăтра Макар хапхаран тухсанах.

— Здоровă пултăр!

— Сывă-ха, çав страховкă укçине тÿлеме шутлатăни есĕ?—тÿрех ыйтрĕ йалсовет председатĕлĕ.

— Шутлатмастăп-ха.

— Мĕншĕн апла?

— Есĕ мана тĕртсе çунтарса йама тытăнмастăн пулĕ-çке.

— Ара вăл страховкă вутран кăвартан пуçне, выльăх-чĕрлĕхрен те...

— Манăн выльăхсене есĕ вĕлерсе пĕтерместĕн пулĕ-çке.—Урăх пĕр сăмах та каламарĕ, килеле утрĕ.

Ку калаçу Елĕк районĕнчи Çирĕк-кассинче 1932-мĕш çулта çулла Макар пичипе йалсовет председатĕлĕ хушшинче пулса иртсеччĕ. Ик çул иртрĕ унранпа. Кăçал та район чентăрĕнче пулнă чухне Макара тĕл пултăм.

— Есĕ-çке, Соловйов!

— Епĕ-ха, ăçтала çул тытрăн?—сăмах хушрăм.

— Таçта çакăнта çунса кайнăшăн кĕт пулăшу параççĕ терĕç те, çавăнпа килсе пăхас терĕм.

— Ай, вуткăварпа сийенлентĕр-и мĕн?—ыйтрăм Макартан.

— Сийен курасси... çулла штрум çумăр вăхăтĕнче хамăр çумри Çтапанăн сарайĕ çине çиçем анса вилсĕ килĕ çунса кайрăмăр. Пушарĕ каçпа пулнă пирки пĕтĕм выльăх-чĕрлĕх пĕтрĕ,—пуçне усрĕ Макар.

— Шалкă.

— Шалкă пулмасăр, темĕнле хĕл каçас,—терĕ вăл чĕтрекен сассипе.

— Макар Михайлович.

— Епĕ.

— Сана епĕр патшалăхран пĕр пус та пулăшу пама пултараймастпăр. Мĕншĕн тесен есĕ çителĕклĕ çирĕп пурнăçпа пурăнатăн пулин те, 3 çул хушшинче страховкă укçине пĕр пус та тÿлемен. Страховкă тÿлесрен йаланах тарса пăрăнса çÿренĕ,—терĕ кассă алăкне уçса документсене кайала парса страхинçпектăр.

— Ах, тăванăм, нийепле майпа та пулăшу пама май çук-и?—кукленсех аннĕ Макар.

— Нийепле майпа та пулăшма пултараймастпăр.

— Висĕ çулшăн страховкă укçине халĕ тÿлесе татсан та пулăшу илме май çук-и?—татах тархаслать Макар.

— Виç çулшăн епĕр санран укçа илместпĕр. Малала тĕрĕс тÿлесе пыр,—терĕ те шалт хупрĕ алăка.

— А, тăванăм, ман пурлăхшăн страховкă мĕн чухлĕ тавăрса параччĕç вара?

— Тăват-пилĕк пин тенкĕ.—Сăмах пĕтрĕ вĕсен хушшинче. Урăх сăмах пулма та пултараймасть. Макарăн та сăмси тăрăх чĕрĕ кĕмĕл пек куçшывĕсем шăрçаланса чупса анчĕç сăмса тăрăх.

Çапла çав чавса çывăх та, анчах нийепле те çыртаймăн.

**Супенке Илли.**

# Кĕске калаçусем

## Урокра.

— Есĕ мĕнле сывлăша вĕçсе кайса çухалакан йапаласем пĕлетĕн?

— Бензин.

— Тата?

— Тата спичкă: вăл час-часах пасарта сутакан частниксем патне сывлăш тăрăх вĕçсе кайса çухалать.

## Хурнайăксем найнине кура.

— Ухмах вăл хуркайăк тени.

— Ма вара?

— Пăххалĕ, хĕл пулас умĕн ăшă вырăна пурăнма вĕçсе кайаççĕ. Подйомнăй укçа ыйтма пĕлмеççĕ.

## Хаçатсем вулаççĕ.

— Сирĕн колхоз правлени колхозниксене вулама хаçатсем çыраннă-и?

— Çыраннă. Чăвашлисем те килеççĕ.

— Колхозниксем вулаççĕ и?

— Вулаççĕ. Колхоз председатĕлĕ килĕнче хăй мухмăр чирпе выртнине урамра иртсе кайакан колхозниксем ан курччăр тесе, чÿречине хаçатпа карнă та, çавна вулаççĕ.

**Фил. Шентвр.**

# Бÿрократ




— Ой, мĕнле çав тери иртĕнсе кайнă вара кусем?! Мана резоԓуци тутармасăрах куна пĕтĕм халăх курмали çĕре çакса йанă.

## Куԓтурлă складпа унăн пуçлăхĕ çинчен

Епĕ Хĕрлĕ-Чутай районĕнчи Хусанкĕн йалнеле ĕçтерсе пырап. Вулав çуртне кĕрсе хама урăхла кĕнеке илесшĕн епĕ.

— Сирĕн клуб çак пулмала-ха?

— Çавă.

— Лайăх. Чиркÿрен тунă. Аван йапала. Кĕрсе урам-ха, тесе алăк патнеле пытăм.

— Стой! Çын. Ăçта кĕрен,—кăшкăрса пăрахрĕ ан патала утса, хуп-хура çын.

— А, мĕн пулнă?—ăнланаймасăр таврала пăхрăм.

— Унта „3-мĕш Райс'езд“ колхозăн тырă—викă ывнă. Еп хуралăç. Кай кунтан часрах,—хыпаланарчĕ мана хай çын.

— Ăнланмастăп, йулташ. Ку сирĕн вулав çуртĕрĕç. Кĕнеке илсе вуласшăн.

— Кунта кĕнекесем пурри пур, анчах никама кĕртместпĕр. Заведуйушчи патне кай!—хăвалаĕ çын.

Шыраса-шыраса вулав çурчĕн пуçлăхне тупрăм. Ăл, Сĕнтĕк çырминче хĕрсе колхоз çĕрулми кăарнă вăхăтра, мăнтăрка арăмĕнпе савăнса ларатĕн.

— Кочетков Георгий есĕ пулатăни-ха?—ыйтрăм ÿртне кĕрсенех.

— Ма вара? Епĕ!—çÿçне шăлса илсе ман çине пăхрĕ.

— Мана, вулама, кĕнекесем парса йар ха.

— Ал айĕнче нимĕнле кĕнеке те çук, йулташ.

Ман урамра лараканн велоçипеда курсан еп раонран килнине асăрхаса сассине антарчĕ.

— Снаш, ман клуба колхоз виккă хывса лартрĕ. Нимĕнле ĕçлеме те май çук. Покка килтех ĕçлекелетĕп.

Килте ĕçлеп тенĕрен пÿрт ăшчикне йĕри тавра пăхса çавăрăнтăм. Кĕтесре урлă хăма çине „политотдел“ тесе ÿкерсе çапнă картин, унăн çийĕнче çветуй Марийĕ хăйĕн ачине ыталаса ларатĕ. Вăтанмарăм. Ыйтрăм.

— Есĕр миçен пурăнатăр-ха?

— Виççĕн.

— Арăмсăр пуçне тата кам?

— Атте. Вăл пирĕн комунис... Ну... Ну, хаԓ, политикпа сахал пĕлнĕшĕн сочувствуйушчине хăварчĕç. Хам комсомол. Йалта аттене иксĕмĕр те „во вçу“ ĕçлетпĕр.

Ыйтса пĕлнĕ тăрăх вăл нимĕн те ĕçлеменнине ăнлантăм.

— Çук, йулташ, епĕ ĕçлекелетĕп-ха, ман умра пулнă избач нимĕн те ĕçлемен. Алтарта портвейнсем çеç ĕççе ларса, кĕленчисене вăлала утса лартăмăр, тет. Нумай пулмасть, пĕр кĕтесре портвейн пуш кĕленчине те тупрăм, терĕ ĕнентерсе.

— Кĕленчесем шыраса çÿрех,—терĕм те тухса утрăм. Куԓтурлă складпа унăн пуçлăхĕ мĕн киле çитиччен пуçран тухмарĕç.

П. Шулгер (Çÿçенке).

# „Тăшман" намăслансах тарнă

Иетĕрнепе Хĕрлĕчутай районĕсем пĕр-пĕринпе йунашарах иккенне, тата вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленине пурте пĕлеççĕ пулмала. Вăл районсенче харпăр хăйне кура районри çĕрĕç тытăмĕсем пурри те, уççăнах палăрса тăрат пулас. Анчах ку районсенчи пурнăçăн хăш-пĕр палăрма кирлĕ татăк-кĕсĕкĕсене пирĕн республикăра пурăнакансем пурте пĕлеймеççĕ. Сăмахран, Хĕрлĕчутай районĕн лаптăкĕ çинче çак районсен йалхуçалăх машинĕсене усрамали склад пуррине, Йетĕрне районĕн лаптăкĕ çинче унашкал йапала çуккине сахалăн пĕлеççĕ. Çук пирки ĕнтĕ, Йетĕрнесен ку тĕлĕшпе ирĕксĕрех çав хăйсемпе туслă пурăнакан район çĕрĕ çине вырнаçнă складпа усă курма лекет. Халĕ ĕнтĕ кун çинчен те пурте пĕллеççĕ тейĕпĕр. Анчах çакнашкал лару-тăрăва пула, Хĕрлĕчутайсем хăйсен пускилĕсем çине пăхас тĕлĕшпе темскерле кукăр-макăрланса кайнине пурте пĕлейреççĕ-ши?

Иç иртнĕ 1933-мĕш çулта вак-тĕвек, кукăр макăр, шуљăкла операцисенчен пуçланса карĕ. Хĕрлĕчутай райçĕрĕç тытăмĕ, склад тенĕ йапала хăйне шанса панă территорянче вырнаçса ларнипе усă курса, Йетĕрне районĕнчи колхозсене тивĕç й/х. машинĕсенчен хăшпĕрне хăй районĕ ваљљи йăкăрткаланă. Кунта хăш, мĕнле тата миçе машинă йăкăртни кирлех те мар, пирĕншĕн чăн-чăнах йăкăртнине лайăх пĕлсе тăнипе те çитĕ.

Хĕрлĕчугай райçĕрĕç тытăмĕн çакнашкал пахаран та паха ĕçĕ машинсен хуçи пулса тăракан Йетĕрне çĕрĕç тытăмĕн мировозренипе нийепле те килĕшсе пырайман. Çавăнпа та, йулашкинчен, асăннă тытăм Хĕрлĕчутайри тытăмпала дипломатла калаçу пуçарса йанă. Вăл, Хĕрлĕчутай тытăмĕ апла-капла хăтланнине хирĕç хăйĕн кăмăлсăрлăхне палăртса татăкла протес тунă. Капла хăтланни чăнахах та ăнăçлă пулнă. Машинсем Йетĕрне районĕн территорине куçа-куçа ларнă.

Анчах Хĕрлĕчутай районĕнчи çĕрĕç тытăмĕн пуçлăхĕсене пĕр шухăш канăç паман. Йетĕрне районĕн ĕнси çине тайăнса хăйсен районĕнчи колхозсене хăвăртрах вăйхаллантарасси, машинлатасси çинчен шухăшланă вĕсем. Анчах, йут алăри пурлăха нимĕнле сăлтавсăрах харпăр хăй çумне пĕтĕркелесе чикме ăмсанакансене законăн тĕрлĕ статйисем кăтартнă тăрăх йепле айăпланине аса илсен, Хĕрлĕчутайри тытăм пуçлăхĕсем шалтах ăнран кайнă.

Анчах кунта, сăмахран калана пек, вĕсен пуçне çав тери хăватлă шухăш пырса ӳкнĕ. Паллах, ĕнтĕ, хăватлă шухăшсем вĕсем сасартăках килсе тухаççĕ. Калăпăр, Исаак Нйутона пĕтĕм тĕнче туртăм законне тавçăрса илсе ун çинче закон кăларма пуçĕ çине пĕр панулми тачланса аннипех çителĕклĕ пулнă пулсан, Архимеда хăй йачĕпе „всякое тело, погруженное в жидкость..." тейекен сăмахсемпе пуçланса кайакан закона кăларма ваннăна (лĕп шывлă такана çиве) çеç кĕрсе лармала пулнă пулсан... мĕн калăн ĕнтĕ Хĕрлĕчутайрисем çинчен.

Хĕрлĕчутайри райçĕрĕç тытăмĕн пуçлăхĕсен шухăшĕ ытла халĕ калани пекех, хăватлă пулайман ĕнтĕ. Анчах вăл хăйĕн паллăлăхĕ тĕлĕшĕнчен илсен, Нйутон пуçĕ тăрне тачлатса анакан историл панулмирен пĕрре те кайа пулман. Тĕрĕссипе кала сан, çак хăвăртлă шухăшăн тĕвви ак мĕнешке пулнă: дипломатла калаçусем тăвас ĕçе вĕсем кол хозсене хăйсене памала тунă иккен.

Ку вара чăнахах та шанчăклă ĕмĕт пулнă. Вĕсе хăйсем мĕн-мĕн тăвас тенине тунă-тунах.

1934-мĕш çулта, склада машинă кӳрсе килсе Хĕрлĕчутайри райçĕрĕç тытăмĕ пĕр полусложнă молотилкăна хăй районĕнчи Саљкасси колхозн халаланă пулнă. Çак молотилкă, паллах, Хĕрлĕчу тайсен мар, Йетĕрнесен пулнă иккен. Çавăнпа Йе тĕрне тытăмĕ ăна Мăн-Чураш колхозне пама тĕл лесе хунă пулнă.

Йетĕрнери райçĕрĕç тытăмĕ Хĕрлĕчутайсе мĕн-мĕн аппаланнине пĕлме пултарайман. Закон хирĕç пыракан ĕçпе хирĕçлес шухăш та пулма вĕсен. Вĕсем мĕн пурри те, Мăн-Чураш колхозн пĕр отношени татăкки çеç, пускилри туслă пур накан район территорийĕнчи складран хăйсен тивĕçлĕ молотилкăна кӳрсе килме ыйтса йанă.

Çакнашкал савăнăçлă хыпара пула Мăн-Чураш сем ниăçта кайса кĕме пĕлменнипе мĕн пур пе çапуççисене, молотилкă тенкелĕсене веçех çапа çапа çĕмĕрсе пĕтернĕ.

Мăн-Чурашăн мăн обозĕ хайхи склада кĕрле терсе çитсен вара унта нимĕнле молотилкă т пулман.

Хĕрлĕчутайсем çакнашкал хăтланнине кура, Мă Чурашсем, паллах, дипломатла чĕлхепе калаç аппаланман, вĕсем тӳрех, Хĕрлĕчутайри райçĕр тытăмĕн пуçлăхĕсен ашшĕ-амăшĕсене, тăванĕсе татăклă сăмахпа асăна-асăна вирлĕн протесле Анчах усси пулман. Вĕсем кăна тавăрса калана:

— Сирĕн молотилкăна епĕр Саљкасси колхозн патăмăр. Йарапарăр, вĕçтерĕр унта. Вĕсенчен к йала илме пултаратăр пулсан—илĕр, епĕр хирĕç тăма шухăшламастпăр.

Саљккассисем ăна-кăна асра та тытман. Хаст та паттăр, молотилкăшăн çапăçса вилме хатĕр к мăлпа хăйсен йалне пырса кĕрекен Мăн-Чураш не хирĕç тухса илме те шухăшламан вĕсем.

Мăн-Чурашсем молотилкăна хăт те вăрçса ви меле пулсан та, илсе тавăрăнатпăрах, тесе, хăй не хăйсем çирĕп сăмах панă пулнă. Кунашкал ç рĕп сăмах панă чухне вĕсем ĕнтĕ „Саљккассис хăраса ӳкĕç те, молотилкăна хăйсен ирĕкĕп парса йарĕç-ха. Кам пĕлет, тен, лавсем çине т йеме те пулăшĕç-ха" тесе шухăшланă.

Анчах, вĕсем молотилкăна кайала тавăрса па ыйтсан, пĕр пысăк та патмар етем пилĕк метр сенĕкпе хĕçпăшалланса молотилкă çине хăпар тăрса:

„Пырса çыхлан тулĕк, пыршу-пакартуна тăп тарса кăларатăп!—тесе кăшкăрса йарсан, Мăн-Ч рашсем хăйсен учĕсене кайала çавăрнă та, хăй тăван çĕршывĕн чиккинеле вĕçтернĕ.

Хĕрлĕчутай райçĕрĕç тытăмĕн пуçлăхĕсем паллах, ку вăхăтра ахаљ ларман. Пысăк ĕç ту Татах çĕнĕ машинсене тытса илес ĕçĕн план аппаланнă вĕсем.

А. Далекий.

# Вăрри, тăмани, хуралçи

Кĕçĕнйелчĕк районĕнчи „Малала“ колхозра хуралçăсем колхоз пурлăхне начар сыхлаççĕ. Еçсе ӳсĕрлсе темиçе кун сыхлама тухманнисем те пур.

Мнеников ӳкерчĕкĕ.



Т ă м а н а:—Мана тăмана, теççĕ. Тăмана елĕ мар, авă çав çывăракан хуралçăна тĕмана тесе ĕнмеле

# Пуçлăх Хăвати

Анаткас Тăрăнти (Шуп.рай.) „МОПР“ колхозĕ кĕрхи çĕртмене ытти йунашар колхозсем туса пĕтерсен тин ĕçе тухрĕç. Чиркӳ праçник уйавларĕç. Колхоз пуçлăхĕ Софронов Хвати те ĕçкĕ ăшĕнчех пулчĕ.

Пуçлăх Хватин
„Ыратаť кăвапи“.
— Ой-ой-й!.. Апи!
Литртан тухаť-и?
Çитнĕ „праçник“
— Чиркĕ праçнĕк...
Пуçлăх Хватин
„Ыратаť кăвапи“.
— Ой-ой-й!.. Апи!
Татах йухаť-и?
Çитĕ çĕртме—
Хăмăла çĕртме.

Пуçлăх Хватин
„Ыратаť кăвапи“.
— Ой-ой-й!.. Апи!
Татах йухаť-и?
„Еçсĕр“ темиçе кун каçнă—
Уйанă праçнĕка
Хăшĕ сăра ĕçнĕ.
Пуçлăх ĕçсĕр, ĕссĕр.
Пуçлăх Хватин
„Ыратаť кăвапи“.
Ой-ой-й!.. Апи!
Татах йухаť-и?

Йухаť сĕлеки,
Тулаť кĕреки.
— А хăçан çĕртме?..
Йарасчĕ тĕртсе.
Пуçлăх Хватин
Ыратаť кăвапи.
— Стой!.. Апи!
Чар!—тата йухаť-и?
Килнĕçке приказ
Советран наказ:
— Çитрĕ тип çĕртме,
Хăмăла çĕртме.

Ф.

Етмен А.

# Çĕр шавĕ*)

1930—31-мĕш çулсем. Нĕркеç кĕрекере кăна ларат. Нĕркеç Патĕрйелĕнче те кĕрекере. Нĕркеç Шупашкарта та кĕрекере. Парне хыççăн парне кĕрет. Председатĕл пĕçтĕп таран атă тăхăнчĕ (ăна Морозова йатарласах паманчĕ те, анчах ниçтан та шăтман çĕнĕ атта пĕçтĕп таран пылчăкра çӳрекен коӈуха йепле тăхăнтарас-ха).

Йатлă çын хыççăн килет йатлă çын. Шупашкартан килет йатлă çын, Патĕрйелĕнчен килет йатлă çын; килет те, кайат.

Еç лайăх пырат. Кирпĕч йанăрат. Кам пĕлмест пирĕн кирпĕче. Канаш, Йĕпреç, Шăмăршă, Шăнкăртан, Патĕрйел, Йелчĕк районĕнче пирĕн кирпĕч монополиллĕ вырăнта тăрат. Ăçти савăт пирĕн кирпĕчпе танлашма пултарĕ? Пирĕн кирпĕчĕн кĕмĕл шăнкрав пек сассипе, унăн, хăла кăвакарчăн пĕсехи пек, вуттăн-хĕмĕн курăнакан тĕсне, çĕклесе çапса çĕмĕрĕлми çирĕплĕхне пирĕн маçтăрсем хура тар кăларса тăваççĕ.

Акă промколхозăн куç ытамне кĕми анлă уй-хирĕ йешĕл бархăт кавирпе витĕннĕ.

Çывăха ан пыр, йулташ! Айакран, Йанкасси йенчен, Сĕнтĕр сăртăнчен пăх пирĕн çĕр çине. Ан пыр çывăха. Кăмăла кача туртан инçелĕх куç курăмне ачашлат,—пăх инçеренех.

Çĕрпе пĕлĕт ыталашнă вырăна çитиччинех йешĕл хур чĕппи тĕслĕ, шăркана ларнă ыраш аслă тинĕсле хумханат. Çийелтĕ, хĕвелĕн шăрăх çутипе вĕçкĕнленсе, ыраш хумĕ çийĕнче çĕр пăвĕ ташлат.

Илемлĕ вĕт пирĕн хир айакран?

Кур-ха авă, виçĕ арман çунатланат виçĕ тĕлте. Икĕ машин вăрăм, çемçе сĕвемлĕ çăм мамăклат. Çу савăчĕ, сысна ферми, чăх-чĕп карти, сурăх кĕтĕвĕ... Камăн? Колхозăн.

Колхоз пуйан, ĕçĕ пысăк. Ун пекки районра та пĕрре çеç.

Анчах сасартăк, вăт имĕннă сасартăк,—„Канаш" хаçатра „Нĕркеçре" йатлă статйа. Сасартăк тăхăр çын тĕрмере. Нĕркеçĕн илемлĕ сăрĕ сасартăк тĕксĕмленчĕ. Колхозăн лайăх йачĕ çав тери майпен сарăлнă пулсан, унăн усал йачĕ сасартăк сарăлчĕ.

Тăхăр çынна тĕрмене тытса кайсан, 1932-мĕш çулта пĕр колхозник Патĕрйелĕнчен килнĕ пĕр чиновнике çапла каланăччĕ:

— Тĕрĕс ĕçлеместĕр. Тăхăр çынна йариччен, сирĕн иккех çынна йамалаччĕ.

— Кама?—ыйтнă чиновник.

— Идиотла фразеолога, тата Йанкасси Çимен Çерук нимуйне.

— Мĕнле отношени имет тăваççĕ вĕсем колхоз патне?

— Нимле отношени те пулманшăн тытса йамаллачĕ çав. Йепле-ха,— мĕнле отношени?.—Пĕри, Никифăрăв—партйачейкă çекретарĕ, тепри—йалсовет председатĕлĕ...

— Ытла шала кайатăн йулташ! Кăна есĕ урăх çĕтре ан кала, атто..,

Колхозник шăлне çыртрĕ.

* * *

Çапах, Патĕрйел чиновникĕ пуçне Нĕркеç ко хозникĕн сăмахĕ шпиӆ пăта пек кĕрсе ларат! Н ужелĕ начар çын вăл Никифăрăв?.. тишкерĕс, ти кĕрес",—тет.

Патĕрйел пĕрре тишкĕрнĕ чух, Никифăрăв Нĕ кеç Уртемейе кăкăрланă. Тепре тишкĕрнĕ чух, х рĕнкĕпе, Виçпӳрт чиккине лаша çитерме кайн урăхла каласан Нĕркеçри Виçпӳрте ĕçме кайн Виççĕмĕш тишкерне чух Елĕк раймилицийĕсе пăскăртса çӳренĕ. Тăваттăмĕшĕнче—Упакасси аташса кĕнĕ те, ашшĕпе амĕшне таканласа хăвар

Çӳресен-çӳресен Нĕркеçе тавăрăнат те трибу çине хăпарат.

Майăн 1-мĕшĕ. Халăх нумай. Патĕрйелсем пу Никифăрăв сăмах калат:

— Товарищчсем! Епĕр первый майра свобод праздноват тунă чух, халӈхи революци çитуаций семпе промышленнăй кризис темскерленсе кай пирки Америкре сокрашчение автопромышленно ти, Англире... „Англире çичĕ мĕлйун безработны Ланкаширте, Йаркшир окрăкĕнче фермăсем м тунă. Парижре... еххĕм... Парижре... еххĕм. Пари ре...

— Таврăн Нĕркеçе, пĕрех хут!—терĕ пĕри х çалтан.

— Есĕ хамăр пурăнăç çинчен каларах пар.

— Йурат, хамăр пурнăç çинчен пултăр. Вăт п рĕн чорная металургияпа тяжелая промышле ность унтан, халӈ пирĕн машинсотроенисем вăйла са пыраççĕ. Епĕр трактăрсем, автомобилсем, ди жаблӈсем тăватпăр. Пирĕн уголӈ добыват тăва пĕтĕм тĕнчипе иккĕмĕш вырăнта тăрат. Пирĕн пек шултра йалхуçалăхĕ тĕнчере те çук: сов „Гигант" и так далее... химизаци пирĕн .. Акă Урал та, Кавказра, Украинăра...

— Нĕркеçе, Нёркеçе тавăрăн, мур! Урал тă çинчен ӳксе вилĕн тата, хăйамат! Капкас тута сем хушшинче есĕ пайан пĕр курка сăра та туп çук, унта хăт те хырăмна çур, айван...

Анчах Никифăров Нĕркеçе тавăрăнмарĕ. Нĕр колхозĕ шалтан ишĕлсе, начарланса пынине к масăр Никифăров Парижпа Филаделфисем тăр аташса çӳрерĕ.

Таврари колхозем акана тухни тăвата кун. Н кеç мăнкуна хатĕрленет. „Октăбĕр йалавĕ" хаçа „Епĕр акана хатĕр" тесе рапăртланă вĕт, çи Ака—мăнкун мар, тармĕ-ха. Ахалӈ те малтан м кайасшăн ăмăртса ĕçлетпĕр. Ĕçсе йулас пĕрре.

Нĕркеç ĕçет. Ĕçет те йурлат. Унтан пылчăклă пер çине йăванса кайат, портфĕлне пуçайне ху те харлаттарат. Йалсовет председатĕлĕ Воро пичетне Аккули патне саклата хăварат ерехшĕ

Колхоз ишĕлет. Растратă хыççăн расратă.

Патĕрйел ыйтат:

— Акана йепле тухрăр?

— Пуринчен те лайăх.

Паттĕрйел ĕненет. Мĕншĕн тесен Никифăр та, Воронăв та, колхоз правленийĕ те акана ту кун 15 лашана пăйав, шыв çитменни çинчен п сăмах та каламан.

---

*) Пулас романăн планĕпе наброскисенчен илсе кĕскетсе çырнăскер.

— Агроминимум мӗнле тата?—ыйтать Патӗрйел.
— Нӗркеҫре туна ӗҫсене агромакҫимум темеле. Унта епӗр тем те туна.
— Ёненетӗп. Шанатӑп. Мухтатӑп. Хӗрлӗ хӑма ана, Нӗркеҫ,—тет Патӗрйел.
Нӗркеҫ хӗрлӗ хӑма ҫине лекет. Мӗншӗн тесен 5 проц. кӑвакарна тула акни ҫинчен, ача-пӑчасене ханса, шӑйрӑк ҫине шӑйрӑк хӑварса сухаланине лапӑрт ҫине кӑтартман вӗт.
— Активистсем активлӑ-и тата?—канӑҫмасть Патӗрйел.
Ку ыйтӑва панӑшӑн Нӗркеҫ тутине те тӑсма пӑхать: „Активист активлӑ ӗҫлемесен йепле активист пултӑр вӑл? Конешнӑ активлӑ“.
Патӗрйел Нӗркеҫри активистсене преми парать. Нӗркеҫри „активистсем“ преми илеҫҫӗ.

* * *

Пирӗн уйхир ҫине Йанкасси йенчен, Сӗнтӗр сӑр йенчен пӑхрӑмӑр вӗт-ха паҫӑр. Ун чухне хитре ҫурхуннеччӗ. Ҫулла, хӑйӗн илемлӗ чечекне сарса, мӗн чур чӗрӗ пурнӑҫа ӑшӑтса савӑнтаракан правише вӑй пуртсе ҫитерне вӑхӑтчӗ. Пӗтӗм ҫутҫанталӑк хитре пар хӗре кашни утасра ултавласшӑн ҫӳрекен кач ӑ пек, ултав уйавне иртеречӗ—шӑркана ларатчӗҫ тырӑсем ун чухне.
Хаљ вӑхӑт кӗр йенне сулӑнчӗ. Вӑйсӑрланнӑ сар кӗвел ҫанталӑка ҫуркунне тӗсне парасшӑн тӑрӑшать, анчах ҫанталӑкӗ, имҫам улӑштарса панӑ чирлӗ ҫын пек ҫеҫ имшерӗн кулкалать. Ылтӑнланнӑ тырпул ҫинӗсле хумханмасть, унта-кунта ларса йулнӑ хыгура ҫеҫ кӗрхи касан ҫилпе шӑхӑрать. Тӑлӑхланнӑ ир. Счетовод йулашки шӑрҫине хучӗ:
— Так-с.
— Мӗн так-с тата, Макҫимӑч?
— Так-с ҫав. Вот есӗ вӗреннӗ ҫын. Мӗн пысӑкрах, 45-и 8-и?
— Конешнӑ 45.
— Ҫук, 8 пысӑкрах. Акӑ 8 гектар 400 пӑт ытла ухӑҫ панӑ, 45-шӗ—387 пӑт. Ну, хӑшӗ пысӑкрах?—ыйтать счетовод.
— Мӗнрен килет-ха ку?..
— Ку-и. Ку, баттӗнка ты мой, чылай йапаларан килет. Ҫӗр уйӑрас ӗҫре кулакла политик пулнӑран—пӗрре; ӗҫе ача-пӑчана шанӑрӑн—иккӗ; кӑвакарнӑ арлӑхран—виҫҫӗ; руководствӑпа ӗҫ хушшине Нӗркеҫре ерех кӗленчи ларнӑран—тӑваттӑ, йалсовечӗ улак пусмӑрӗнче тӑнӑран,—пиллӗк... Сӑлтавсем тата нумай, анчах чи пысӑк сӑлтав, вӑл—идиомла фразеологи... Никифров.
— Та-ак-с иккен-ха апла. Ӑҫта-ши уйхирӗн илемлӗ?..
— Так-с ҫав, баттӗнка! Нӗркеҫ темле ҫынна тарантать. Хаљ тата ав, Савељйева кунта йачӗҫ. Пирӗнчӗк-пӑрӑнчӑк ӑвӑс вутти пек кӑна та вӗт хӑй, колхоз пурлӑхне унтала та кунтала ҫеҫ выљатать. Ӑна ӑста. Ну-кӑ, попробуй ӑна кунтан хӑпартма, Патӗрйелӳ шӑртланса кайсан тарса пытанаймӑн... Ӑрмана кӗнӗҫемӗн вутӑ нумайланать, тенӗ ваттисем,—айта-ха луччӑ митинга...

---

Питӗ шавлӑ митинг пулчӗ ун чухне. Сана, вулакан йулташ, митинг вӗҫне кӑна кӑтартам.

**Комиҫҫи председателӗ**:—Оратӑрсен списки пӗтрӗ. Митинга хуп...

**Никифӑрӑв** (халӑха чавсисемпе тӗрткелесе трибунӑ патнеле васкать. Сӑран пинжакпа, картусӗ хӑлхи йеннеле сӑмсаланнӑ):—Пастай-ха, пастай, чорт воҫми! Ан хуп митинга.

**Председателӗ**:—Пирӗн оратӑрсен списки пӗтрӗ. Йулашкинчен, партйачейкӑн таҫта аташса ҫӳренӗ ҫекретарне саламлӑ сӑмах паратпӑр (халӑх, шав, кулса йачӗ).

**Никифӑров** (трибунӑ ҫинче):—Еп... Еп... Аташса ҫӳремен еп. Епӗ... Вот ман, чорт воҫми, калуш (уринчи калушне хывса халӑха кӑтартать). Еп Макҫӑм патне калуш саплаттарма кайнӑ. Тарса ҫӳремен епӗ... Ман калуш...

**Пӗр колхозник** (халӑх хушшинчен):—Ҫитӗ, пӗлетпӗр ӗнтӗ сан калушу мӗнлине, ҫитӗ.

**Никифӑров**:—Вот есӗр мана пӳлетӗр. Апла...Мӗн... Ман доклад та пӗтрӗ. Сывӑ пултӑр калуш... ей, чорт воҫми... Октӑберӗн вунпилӗккӗмӗш уйавӗ... (Халӑх шӑхӑрать, кулать, кӑшкӑрать)...

**Курма таварӑннӑ хӗрлӗ салтак** (преҫедателе чеҫт парса халӑх йеннеле)—Ррат-та, слушай мою команду-у-у! Равняйс на лево" Ҫмир... На-пра-во! Справа по четыре—... направление вдољ дороги-и... шаго-ом... а-арш!..
(Йӗркеленсе, харӑс пусса, йалавсене хумхантарса, „Смело товарищи в ногу“ йурласа митинг урам тӑрӑх утрӗ).
Трибунӑ пушанса йулчӗ. Никифӑрӑвпа Воронӑв пуҫа усса йулчӗҫ.
— Мухмӑр пуљ сан пайан?—ыйтать Воронӑв.
— Пуҫ шӑтса тухать... Ех, сволӑчсем!.. Пӗтӗм йал умӗнче намӑса йачӗҫ. Ну, айта... Мухмӑр уҫасси сывӑ пултӑр! Ха-ха!
— Туллит-туллит ыр курар хӗрлӗ йалав, хӗрлӗ йалав айӗнче,—йанӑрать йурӑ урамра.
Патӗрйел ҫыннин пуҫӗнчи шухӑш пӑти тепӗр хут йӑшӑлтатрӗ:
— Ҫук. Нӗркеҫ ҫине хӗрлӗ хӑмапа паргд тӳпелӗкӗнчен пӑхмала мар иккен. Халӑх ҫирӗп, анчах унӑн ҫулӗ нумай йуплӗ, туратлӑ унӑн ҫулӗ...
— Куратӑн-а, йепле пирӗн матрассем?—ыйтрӗ колхозник Патӗрйел ҫыннинчен.
— Курасса сунманчӗ епӗ ӑна капла. Акӑ ӗнен ӗнтӗ ӑна, прохвоста. Акӑ ӑста „авторитет“. Калуш сапланӑ вӑл, ха-ха-ха! Калуш... Анчах кам ларӗ-ши ку калуш ҫине?

## Паллӑ.

— Мӗнле ара Германи сучӗ комуниссене питӗ хытӑ айӑплать?
— Мӗншӗн тесен вӗсем пролетарирен тухнине асрах тытать вӑл.

# Шӳрпе

Ҫентӑберӗн 17-мӗш, 1934-мӗш ҫул. Ҫӗн-Ирчемесри (Хӗрлӗ-Чутай районӗ) пӗр пӗчӗк, лапчӑк, хӗвеле тӳртӗн ларакан пӳрте кӗтӳпех ачасем чупса кӗрсе карӗҫ.

— Шкул-им кунта сирӗн?—ыйтрӑм сумкине силлесе чупакан пӗчӗк ачаран.

— Шкул мар, хурал пӳрчӗ.

— Мӗншӗн тата есӗр кунта килетӗр.

— Апат ҫиме.

— Колхоз правленийӗ ӑҫта тата?

— Ҫакӑнтах...

Ача, пӳтек пек сиккелесе пусма карчӗ тӑрӑх чупса хӑпарчӗ те, пӳрте кӗрсе карӗ. Епӗ те кӗтӗм унӑн хыҫҫӑн.

Пӳрт тӗттӗм, виҫӗ ҫӗмрӗк чӳречерен урамра усӑсӑр картласа ларакан йӑвӑҫсем хушшипе аран-аран кӑшт ҫутӑ кӗрет. Пӳртре туллийех ачасем. Кӑшкӑрашаҫҫӗ, вӑрҫаҫҫӗ, чупаҫҫӗ, йӗреҫҫӗ вӗсем.

Акӑ, тата тепӗр ачи тепӗрне пуҫран кашӑкпа шаклатрӗ, акӑ—„ача купиле" пӗр-пӗрин ҫине купаланса выљаҫҫӗ, акӑ сӗтел ҫинче пӗри оратӑр пулса доклад тӑвать, акӑ—тепри шлепке тӑхӑннӑ пек пуҫӗ ҫине чашӑк тӑхӑннӑ та пуп пулса вӑкӑр пек мӗкӗрет, т. ыт. те.

Каласа та пӗтерес ҫук, курса та пӗтерес ҫук. Темӗн те курӑн кунта пӑхсах тӑрсан. Епӗ театарсенче те кунашкал тӗлӗнмели курман.

Шав. Тусан. Нимӗн илтмели ҫук,—хӑлха хупланса ларчӗ, нимӗн курмали те ҫук,—куҫ умӗнче тусан мӑкӑрланать кӑна...

— Микита! Пӑх-ха, пӑх мана!—тесе ман умра пӗр ача ҫӑкӑртан чӑмӑртаса сӑмса туна та кӑтартать.

— Кӑвакал! Нарт-нарт!—Кӑвакал. Ӑҫта кайан, мӑн сӑмса?—ҫуйӑхать Микита тени.

— Пӑрҫа хурас ун умне, ҫийет-и? Хырӑмӗ выҫӑ пулӗ-ха.

Сӗтел ҫине ачасем пӑрҫа хурса параҫҫӗ те лешӗ—„кӑвакалӗ" вӑрӑм сӑмсипе кӑт-кӑт—тӗкет. Ҫав самантрах сӗтел тӑрӑх пӗр ачи чупса пырать те „кӑвакала" пуҫӗнчен пусать. „Кӑвакалӗ йӗрет, унӑн куҫ лупашкине пӗтӗмпех чуста хупласа лартнӑ,—пӑхаймасть.

Пӳрте витрепе вӗри шӳрпе йатса пӗр хӗрарӑм кӗрсе кайать. Аллинче—мӑнӑ ҫӑпала. Пӗтӗм ахӑракан ачасене пуҫран шаккать вӑл ҫӑпалапа. Шӑпланчӗҫ ачасем пӗр тапхӑр. Хӗрарӑм витререн шӳрпе ӑсса чашкӑ ӑшне йарса пама пуҫлать.

— Ҫитмест!..

— Ҫитмест шӳрпе...

— Тавай чаҫрах мана!

— Мана...

Каллех шав. Ӑмӑртса чупса пычӗҫ витре кутне, пурте шӳрпесӗр йуласшӑн мар. Тӗккеленеҫҫӗ, ҫапаҫҫӗ каллех. Йулашкинчен кӑшт йулнӑ витрине те ӳкерсе тӑкса йачӗҫ. Вара пуҫларӗ лешӗ вӑрҫма, ҫӑпалапа шаккама.

— Ҫийӗр кирек те мӗн. Сирӗншӗн!..—терӗ те тухса карӗ хӗрарӑм.

Ачасем ҫиме пуҫларӗҫ. Сӗтел ҫинче вырӑн ҫук. Пӗр пилӗк-ултӑ ача йӗри-тавра виҫӗ ҫӗрте картланса тӑнӑ та урай варрине чашкисене лартнӑ.

— Сана ҫитерместӗп!—тесе чышса йачӗ пӗрне чашкӑ хуҫи,—мӗншӗн есӗ ху чашкӑ илсе килмерӗн?

— Ҫӗмрӗлчӗ манӑн.

— Сана та ҫитерместӗп!—хӑвалать тата тепӗрне,—кай.

Леш ачи ӑна хӑйне хӑваланӑшӑн пуҫӗнчен кашӑкпа ҫатлаттарать те пӑрӑнать. Урай варрине ларса пӗр лӑпам тӗлте пухӑнса тӑнӑ шӳрпене ӑсса ҫимех пуҫлать вара вӑл.

— Белов, мана та сыптар-ха хӑвӑн кашӑкупа

— Ху мӗншӗн илсе килмерӗн?

— Манӑнне вӑрларӗҫ пайан. Миҫак вӑрларӗ пулмала.

— Кай, хамӑр та, ав куран пӗр кашӑкпа тӑватӑн сыпатпӑр. Ан тӑр чӑрмантарса.

Ыйтакан ача темиҫе ҫӗре пырса ыйтрӗ, ҫитерекенӗ ҫук. Пӗр кашӑкпа виҫҫӗн-тӑваттӑн, пӗр чашкран—саккӑрӑн тӑраннӑ,—ҫийеҫҫӗ. Кашӑк ҫук кипе ача кӑмӑлсӑр пулса урай варринчи ҫисе ларакании патне пычӗ те выртса шӳрпене йатӑ пек ҫулама пуҫларӗ. Малтан пыни ӑна пуҫран кашӑкпа темиҫе хутчен те ҫапрӗ, ҫӳҫӗнчен тытса сӳтӑпкине силленӗ пек силлерӗ, хӑлхинчен те тытса туртрӗ, ҫапрӗ, чӗпӗтрӗ, ҫыртрӗ, ҫапах та чараймарӗ, урайӗнчи—уйӑх ытла ҫумасӑр тӑпрапа пирченсе ларнӑ урайӗнчи ҫӗрулми йашки тӑнч типсе ларчӗ.

Ҫапла пулса иртрӗ ку ӗҫ. Ӗҫ те мар—мыскара. Ачасем хӑшӗ тӑранаймасӑрах, йе хӑшӗ-пӗрисем вуҫҫех йашка тутине пӗлеймесӗрех тутисене мӑрт-мӑрт!—тукаларӗҫ те тухса карӗҫ.

Дисциплинӑ ҫук. Тасалӑх ҫук. Ҫухалнӑ, ҫӗтнӗ.

Ҫӗн-Ирчемесри пуҫламӗш шкулӑн пуҫлӑхне—Назарӑва, тата мыскара кӑтартакан ачасене вӗрентекене—Кокшакина вӗри апат ҫинӗ чухне тӳсме ҫук пулакан йӗркесӗрлӗхсене пӗтерме хушатпӑр, итлемесен вӗри йашка ӑшӗнчен йӗплӗ ҫӑмаркӑларса ҫитерӗпӗр.

**Михаил Айгир.**





## Ачасен викторининчен

Лаҫтик илме ун чухлӗ кирлӗ, карандаш илме ун чухлӗ, „Капкӑн илме уйӑха мӗн чухлӗ укҫа кирлӗ,—ҫавна пӗлӗр те укҫине писмоносец аллине тыттарса унран квитанци илӗр.

# Хăйне суйлавра кăларса пăрахасран хăракан бӳрократ

Çверчков ӳкерчĕкĕ.




— Шухăшлатăп, шухăшлатăп та çав советсене суйлас кампани çинчен, ăнран кайатăп: пĕрре ĕлĕк суйласа хунăскере мĕншĕн çĕнĕрен суйласа аппаланас, — волокиттă тенĕ йапала çук-ши çапла хăтланнинче?

# Макар мучи çеç хурланса йулчĕ

Хĕвел сарăлса тухсанах Макар мучи патне бригадир Павлăв пырса кĕчĕ те:

— Макар мучи, есĕ пайан Йетĕрнери çпирт савăтне хĕрлĕ обозпа çĕрулми леçме кайатăн. Лашине Ҍавайăн „Красный востока“ тытса кӳлетĕн. Йуратӑ-и çапла?—терĕ.

Макар мучи хăй ватă пулсан та, ĕç патне тухма пырса каланăшăн шутсăрах хĕпĕртерĕ. Хĕпĕртенипе:

— Йуратӑ, йуратӑ... кайăпăр, ывăлăм, кайăпăр. Еп Хĕрлĕ обозпа кайма хавас. Спаçипă сана, ачам, ĕç патне килсе каланăшăн, питĕ пысăк спаçипă. А, „Красный восток“ çук пулсан мĕнле лаша кӳлес.

— „Красный восток“ çук пулсан—коҍухсенчен урăх лаша ыйт.

— Йурĕ, йурĕ кайăпăр,—тесе бригадира савăнăçлăн ăсатса кăларса йачĕ. Бригаидр Макар мучи панчен васкасах тухса кайрĕ,—унăн ытти колхозникĕсем патне те çитмеле.

Макар мучи бригадир тухса кайсан нумайах та тăхтамарĕ, пĕр тăват-пилĕк минутран кивелнĕрех сăкманне тăхăнса чĕлĕмне чĕртсе пĕрлешӳлĕ выҍăх карти йеннеле тухса утрĕ.

Вăл пĕрлешӳлĕ выҍăх картине çитсенех коҍухсенчен йĕвен илсе „Красный востока“ тытса тухса сӳсмен тăхăнтартма тăрсаччĕ, сасартăк Ҍава пырса кĕчĕ те:

— Ăçта кайатăн ес, пӳтсĕр, ман лашана ма тытса? Кам хушрĕ сана ман лашана тытма? Ес колхоза лашапа кĕмен, çын лашине ан тыт. Çын лашине кӳлме тивĕç çук сан. Тавай лаша!—тесе ăна йытă пек харкашма тытăнчĕ.

Çав хушăрах Макара ĕнсерен тăхăнтарса йарса лашине туртса илчĕ. Анчах Макар мучи Ҍавана хирĕç нимĕнех те шарламарĕ,—йурĕçке, терĕ анчах. Часах вăл коҍухсем патне кĕрсе урăх лаша ыйтрĕ. Коҍухсем, аслă коҍух—Ҍвов Петĕр лашине „Шугуҍа“ тытса кӳлме хушрĕ. Макар йĕвен илчĕ те „Шугуҍа“ тытса тухса кӳлме тăчĕ. Ак тамаша! Макара ваҍҍи ни сӳсмен, ни йĕнерчĕк, ни урапа, нимĕн те çук. Ăçтан тупас, мĕн кӳлес? Анчах Макар нумайах шухăшласа тăмарĕ, часах коҍухсем патне пӳрте кĕчĕ те:

— Лаша хатĕрсем нимĕн те çук, мĕнле кӳлес? Ăçта хунă есĕр? Тупса парăр,—тесе ыйтрĕ.

— Епĕр нимĕн те пĕлместпĕр. Бригадиртан кайса ыйт, вăл пĕлме кирлĕ,—ответлерĕç висĕ коҍух пĕр харăс Макар мучи ыйтуне хирĕç.

Макар мучи лашине кăкарса бригадир патне тухса вĕçрĕ. Çитрĕ вăл бригадир патне, анчах бригадирĕ килте çук. Ăçта кайас, камран ыйтас, кам тупса паратӑ лаша хатĕрĕсене:

Анчах вăл нумай та шухăшласа тăмарĕ, часах пуп пек, колхозниксем патне килĕрен киле кĕрсе лаша хатĕрĕсене шыраса çӳре пуçларĕ.

Чылай вăхăт шырарĕ вăл, вунçичĕ киле кĕчĕ—нимĕнех те тупаймарĕ, вунсакăрĕмĕш киле кĕрсен аранах, Йакур арăмĕ патĕнче: урапа, сӳсмен тупрĕ, вунтăхăрĕмĕш киле кĕрсен, Уçăп Йакăначĕ патĕнчен йĕнерчĕк тупса тухрĕ те, сӳсменне йĕнерчĕкне урапа çине хурса, урапине пĕрлешӳлĕ выҍăх картине туртса кайса лашине кӳлме тăчĕ. Ак каллех тамаша, пĕкĕ çук. Пĕкĕсĕр лаша кӳлме çук, тупасах пулатӑ.

Каллех пĕкĕ шырама тухса чупрĕ Макар мучи. Вăл ватă пулсан та, çамрăк физкуҍтурниксем пекех, хытă чупатӑ. Васкатӑ... Пĕкĕ шыраса та сакăр киле çитрĕ, çук. Тăххăрăмĕш киле кĕрсен аранах пĕр кивĕ пĕкĕ тупса тухрĕ. Ку кивĕ пĕкĕ тупсан шутсăрах хĕпĕртерĕ.

— Ну, пулчĕ ĕнтĕ, хĕрлĕ обозпа кайатпах,—терĕ хăйĕн ăшĕнче.

Пĕрлешӳлĕ выҍăх картине çитсен лашине сӳсмен тăхăнтартса, турта хушшине кӳртсе тăратса кӳлчĕ. Ак каллех, татах тамаша. Урхалăх çук. Паçăр урапа туртса килнĕ чухне пурччĕ, хаҍ такам вĕçертсе илсе кайнă. Пăхкаларĕ, татах тепĕр йапала—тилхепе çук. Макар мучин каллех пуп пек килĕрен киле çӳресе ревизилеме лекрĕ. Çук. Тупасах пулатӑ. Урхалăхсăр, тилхепесĕр никам та, ниçти тĕнчере те лаша кӳлекен çук.

— Сирĕн патра ытлашши тилхепепе урхалăх пур-и?—ыйтатӑ Макар мучи, колхозниксем патне пырса кĕрсен.

— Çук. Ытлашшине кам туса панă пире,—ответлеççĕ колхозниксем Макар мучи ыйтнине хирĕç.

Макар мучи лашине: но!—тесе уттарма тăначчĕ, анчах çак вăхăтра икĕ колхозник харăс Йакурпа Иван пырса кĕчĕç те:

— Ку пĕкĕ манăн, ес çын пĕккине ма кӳлсе? Тавай пĕкĕ, тăвар лашуна!—тесе çухăрма пуçларĕ Иванĕ.

Йаккăвĕ:

— Ку, сӳсменпе ĕнерчĕкĕ манăн, еп вăл сӳсмене ĕнерчĕке пĕр çулталăк шăп шырарăм, пайанхи кун аранах тупрăм. Макар, ес мĕншĕн пытарса усраса. Ват супнă, вилме маннă старик, тавай сӳсменпе ĕнерчĕке. Тăвар лашуна!

— Ара епĕ ăна пытарса усраман, пайан епĕ ăна, сӳсменне Хура Йакку арăмĕ патĕнчен, ĕнерчĕкне Уçăп Йакăначĕ панчен тупса тухрăм, епĕ нимĕнте айăплă мар,—хирĕç тавăрчĕ Макар мучи.

— Ес хирĕç чĕнсе тăратн-и тата, тăвар лашуна,—тесе, чышкисене чăмăртаса качака таки пек сиксе пычĕ Йакку Макар мучи патне. Макар мучи аранах лаша витине тарса кĕме ĕлкĕрчĕ.

Йуккупа Иван хыççăн Тимушпа Михала пырса кĕчĕç. Михалийĕ:

— Ку урапа манăн,—тесе урапине йышăнса илчĕ.

Тимушĕ:

— Ку урхалăхпа тилхепе манăн, тесе урхалăхне йарса илчĕ. Йулашкинчен Петĕр пырса кĕчĕ те:

— Еп хам кайатăп, хамăн лашана никама та памастăп. Мана никам та лаша илсе паман. Парăп епĕ лаша,—тесе лашине çавăтса тухса кайрĕ.

Мĕн тăвас тетĕн? „Харпăр хăйĕн“ харпăр-хăйне кӳлсе тăратнă лашана тăварсах, лашине кӳлмелли хатĕрсене валеçсе илчĕç колхозниксем. Ним тума та çук...

Макар мучин ир пуçласа кăнтăрччен чупса тар йухтарни пустуйах пулчĕ... Унăн нимĕн те çук...

Колхозниксем лавсем çине çĕрулмисем тийесе, пĕкĕсене хĕрлĕ тутăрсем çакса, хĕрлĕ йалавсемпе, хут купăссем выљатса, йурласа Йетĕрнери çпирт савăтне „Хĕрлĕ обозпа“ савăнăçлăн тухса кайрĕç. Пĕр Макар мучи çеç, çур кун утса, тар йухтарса ĕшеннĕскер, хурланса, пăхса тăрса йулчĕ. Макар мучишĕн çеç савăнăçлă кун пулмарĕ...

Кун пек харпăрхăйлăхпа кӳлмели хатĕрсемшĕн чупасси Чурбай йалĕнчи (Йетĕрне районĕ) „Йамос“ колхозĕнче те час-часах пулкалат̆. „Йамос“ колхозĕнче çеç мар, хаçатсем кăтартнă тăрăх, ытти хăш-пĕр колхозсенчен те пур ун пек харпăрхăйлăхсемпе çитменлĕхсем. Анчах малашне пур колхозсенче те: ку санăн, ку манăн,—тессине, харпăр-хăйлăхпа пурнассине, тата ытти çитменлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсене тĕпренех пĕтермеле.

**М. Дангер.**

# Йетĕрне шывсăр аптрат̆

Хула совечĕ граждăнсене шыв çителĕклĕ парса тăрасси çинчен шухăшламаст̆. Шывне „качат̆“ тăватăн, тăватăн, пĕр тумлам та тухмаст̆ хăш чухне. (Йетĕрнери хула совечĕ отчочĕ тăрăх тухса каланисенчен).

В. Макаров ӳкерчĕкĕ.



**А ч а: Хытăрах „качат̆“ ту. Тарна шеллетĕн-и мĕн? Тар шыв пĕр витре пухса кайсан анне валљи сăмавар лартма пулат̆.**

## Прогулѣшчик
# ГОССПИРТ



— Йултăшсем, черет урлах илме парăр-ха тархасшăн. Черетре тăрса промфинплана срывать тăвас килмест.

# Кăмака историйĕ

Ку кăмака Канаш районĕнчи Шаккăн йалсоветне кĕрекен Кивĕ Ахпӳрт йалĕнче ларать. Кăмаки кăмака-пекех вăл. Кирпĕчсем те, тĕсĕ те, кăмака çăварĕ те нимрен те уйăрăлса тăмасть. Вăл пуçламĕш шкулăн пĕр пӳлĕмĕнче хăйне валѣи кĕтес йышăннă та: „Хайар сивĕсем çитсен хам йуратнă вĕренекен ачасене ăшă парса вĕренӳне пулăшу парăп",—тесе шутланă пек шутласа, çуталса ларать аслă класра.

Кĕрхи кун. Çил ачи чӳрече рами хушшине хĕсĕнсе радиопа мĕкĕрет. Вăл мĕкĕрнине Шаккăл вăтам шкул пӳлĕмĕсем аван пĕлеççĕ. Кăмакан пĕр вĕçĕ йаланах пӳрт çийĕнчен тухса тăрать. Çавăнпа: уу-уу-уу..... улать кăмака. Темле пусса пăрахма çыхса хунă вăкăр пек улать кăмака.

Пырса кĕчĕç пӳлĕме виççĕн-тăваттăн.

— Сӳтĕр çак кăмакана,—приказ пачĕ йалсовет пуçлăхĕ шурă кăмакана алă чăмăрпе чышса. Чышнă майăн алли ыратрĕ пулас пуçлăхăн, ал чăмăрне пĕр çекунд хушшинче хăйĕн приказ пама вĕреннĕ пысăк çăварне персе хыпрĕ.

— Пайан ачасем вĕренес пулать ку пӳлĕмре, урок хыççăн сӳтĕр,—терĕ учком пуçлăхĕ.

Хĕле кĕтсе ларакан кăмака висĕ çыннăнултă алă айĕнче тумтирне хыва пуçларĕ.

Шкул пуçлăхĕ Антоновă, вăлах учителницă, паравус пек хашлатса çитрĕ. Вăл шкул кăмакине сӳтеççĕ тенĕрен çара пуçăнах вĕçтерсе çитрĕ.

— Мĕншĕн сӳтетĕр?—ыйтать вăл тусаппа чака ланса кайнăскерсенчен.

— Пире председател хушнă,—ответлаççĕ лешсем.

— Чарăнăр сӳтме!..—çилленсе пĕлтерчĕ Антоновă.

Пĕр çур сехет хушшинче кăмака ларакан кĕтес кукша пуç пек çап-çара пушанса йулчĕ.

* * *

Пуçлăха шкул кăмакине сӳтни çинчен каласа панă хыççăн Антоновă пĕр: „Молчать, сан ĕç мар... кăмака советăн. Покка кăмакасăр пурăнăр... Пире, канцелѣари çурчĕ валѣи кирлĕ!—тенĕ сăмахсăр пуç не нимĕн те илтеймен.

„Аслă пуçлăх куçне чарнă, вăрăм урине сĕтел тепĕр йенне авса кăларнă, мăк-мăк тăвакан тутине карнă.

Учителницă татах татăклă ответ илес тесе пуçлăх куçĕнчен пуçласа ура тупанĕ таран пăхрĕ те, çав мĕскĕн кăмака çинчен каларĕ. Кăмака куçарма приказ панă пуçлăх урчĕ:

— Тухса кай!.. Ан вĕрент!—тесе пĕрĕхтерчĕ çăварĕнчен кышласа ларнă пирус тĕпне.

Урăх пĕр сăмах та чĕнмерĕ пуçлăх. Сăрсăр сĕтел айне урине татах чикрĕ, çăварне çĕнĕрен пирус хыпрĕ, пуçне аттамансем пек сӳлеле каçăртрĕ, Уч-

# ТИРПЕЙСĔРЛĔХ

Н. В. Никольскин чăвашла-вырăсла словарĕнче ку сăмаха вырăс чĕлхипе çапла ăнлантарнă: „тирпейсĕр—небрежный, неряшливый; тирпейсĕрлĕх—неряшливость.

Манăн сире тирпейсĕрлĕх çинчен çерçи сăмси пысăкĕш докладла лекци вуласа парас кăмăлăм килсе карĕ.

Тĕрĕслех каласан, пĕрте суймасан, тирпейсĕрлĕх сийĕн кÿрет, тирпейлĕх усă кÿрет. Апла пулсан, мунчана çулталăкра пĕре мар. темиçе хут та çÿремеле, кĕпе-йĕме пĕре тăхăнсан çĕтĕлсе мунчала пулас вăхăт çитессе кĕтмесĕрех улăштармала, пÿртçурта ĕмĕр тăршинче пĕре кăна мар, темиçе хут та тасатмала, пÿрт урайне çÿп-çапсенчен такăнса ÿкмеле пуличченех шыв пĕрĕхсе шăпăрпа шăлса тухмала. Кусене тусан тирпейлĕх тени пурнăçа кĕрет тесе шухăшламала.

Анчах... ку вăл теорире. Ĕçре урăхларах пулса пырать.

Сăмахран, Шупашкар районĕнчи Тарăн-çырма ялĕнчи „Комбинат" колхоз председателĕ Кузнецов юлташ çийелти тумтирĕ, кĕпе-йĕмĕ çине кăшт пылчăк ларсассăнах йе шăлса тасатать, йе улăштарса тăхăнать. Пуç купташки çине ÿссе ларнă çÿçĕсем ăшĕнче пĕр шăрка та, куçлăх тăхăнса шырасан та, тупаймăн. Кĕлетки, тумтирĕ тап-таса, ялкăшса çеç çÿренĕ пулин те, алли унăн таса мар, пылчăклă (тарăн-çырмала каласан, лапралă) пулнă. Çавассăн çунă вăл аллине, супăньпех çунă, анчах темĕн чухлĕ çусан та, ывăçгупанĕ çумне халăх укçа-тенки çыпăçмала мар пуличченех çăваймăн. Çавăн пиркиех ĕнтĕ вăл пĕтĕм халăх умĕнче халĕ намăса кĕрчĕ (унăн ывăçтупанĕ çумне халăх укçи 289 тенкĕ çыпçăннă). Счетовочĕн алли çумне те çавăн пекех 210 тенкĕ халăх укçи çыпăçса ларнă...

Урăх майлă ĕçсем те пирĕн хушăра сахалах мар пулаççĕ. Акă, калăпăр, Тутаркас районĕнче муньча пит сахал. Вăл районри хресченсемпе колхозниксем муньчара çăвĕнма пит йуратаççĕ. Анчах муньча çукки вĕсене пĕтерет. Килтех çăвăнăпăр-ха, теççĕ. Анчах хăшпĕр çынран:—çăвăнтăни-ха ĕнтĕ килте тесе ыйтсассăн, вăл сана çакăн йышши ответ парса хăй тирпейлĕ çын иккенне пĕлтерет: „килте çăвăннă чухне шыв сирпĕнсе урай хăми çĕрме пултарать. Тирпейсĕр çын мар вĕт епĕ, хамăн ÿттире таса тытасшăнах, урай хăмисем çĕргсе, кайран Советран хăма тумалăх йăвăç ыйтма. Луччă çăвăнмасăрах пурăнам та чипер ÿсекен вăрмана сийен кÿрем мар", тет.

Канаш вăрманпромхозĕнче ĕçлекен каççир Кабайĕв, склад заведуйушчийĕ Назаров, счетовод Крылов пуçĕсене кашни ернерех супăньпа çăваççĕ, çапах та вĕсен çуса тасатнă пуçĕсене таса мар шухăшсем кĕрсе вырнаçнă. Таса мар шухăшсем вырнаçнă пирки, Кабайĕвĕ 1,500 тенкĕ, Назаравĕ—1,700 тенкĕ, Крыловĕ—383 тенкĕ растратă тунă. Халĕ ĕнтĕ вĕсем таса мар çынсем шутĕнче тăраççĕ. Çавăнпа вĕсене хăйсем йуратман пылчăк çийĕнех тĕрмене çаватса каймала пулать.

Тата, калăпăр, сан патна йулташ пырать. Урисем унăн, конешнă, хальхи кĕрхи вăхăтра пылчăклă. Пылчăклă урапа урайне вараласа ларас мар тесе, санăн йулташу тÿрех койкку çине таса мар урисемĕнĕпех хăпарса выртать... Урайа пылчăклă урипе варалăсран шикленмен пулсан, çавăн пек санăн койкку çине хăпарса выртас çукчĕ те пулĕ вăл. Тасалăха йуратнă пир... сана сийен туса хăварать...

Урăх майлă ĕçсем те ... улма пултараççĕ. Сăмахран, Çĕрпÿ районĕнчи „Максим Горький" колхоз председателĕ, пĕтĕм ÿт-тирне кăна мар, сăмса шăтăкĕсене те тап-таса тытать, чакаласах тăрать. Хуттсене пурне те ним варалама сăр çырнисене йуратать. Пĕре унăн пуç мимине: „колхоз пурлăхне салатсан, шыраса тупма май ан килтĕр" текен усал шухăш пырса кĕнĕ. Çав таса мар, усал шухăша хăваласа йама, пенĕ кăна учот кĕнекисемпеле. Пĕре пенĕ—таса мар шухăшсене тивретеймен, тепре пенĕ—каллех тивретеймен, виççĕ пенĕ... виççĕ персен учот кĕнеки çĕтĕлсех кайнă. Ку çĕтĕлнĕ кĕнекене ревизорсене кăтартма намăс, тесе вăл çĕр те пилĕк хут туса çĕтсе тăкнă...

Тепĕр йышшисем, сăмахран, Канаш районĕнчи Шакăл йалсовет председателĕ Николайĕв пеккисем, ĕçес пулсан вара хăсăк тухаччен ĕçеççĕ те, анчах тасалăха йуратнă пирки хăсас пулсан, пÿртре хăсмаççĕ, урам варринче сарăлса выртса хăсаççĕ.

Çапла вăл тирпейсĕрлĕх. Тирпейлĕх пулнă пулсан, тирпейсĕрлĕх пулмĕччĕ те, анчах тирпейлĕх çукки чăрмантарать.

**Иван Мучи.**

---

тах Антонова пуçлăха йатла-йатла тухса кайнă хыççăн, пирĕн кăмака вăрри Николайĕв шухăшсен айне путрĕ.

„Халĕ патшалăха тыр-пул сутасси çинчен калаççĕ... Чорт вĕсене учитĕлсене. Самăй кирлĕ ĕç çинчен шухăшлас чухне пĕр пĕчĕк ĕç—кăмака пирки настроенийĕ пăсса çÿреççĕ.

Шкул пуçлăхĕ апла та капла та шухăшласа пăхать. Мĕнле çăлас ку кирпĕчсене йалсовет аллинчен. Мĕскĕн нимĕн тума аптранипе:—Ачасем, кирпĕчсене тĕп сакайне йатăр,—тесе хушать хăй ачисене. Пĕлет капла пытарни авăн мар. Анчах...

Ачасем тĕп сакайĕнче пĕр кĕтесре тепĕр хут çĕнĕ кăмака вырнаçтарса хунă пек хучĕç кирпĕчсене.

— Ивук, Ивук!..—тесе пытанмала выляççĕ кирпĕчсем. Анчах вĕсен пытанса пурăнасси пĕр сехете кăна пычĕ.

Çитрĕç хайхи кăмака истори тăвакансем кирпĕчсене урнă йытă пек туласа, Антонова вăрçсах тийеççĕ лав çине.

Тепĕр икĕ кунтан Шаккăлтан виçĕ çухрăмра ларакан Ахпÿртрен куçнă кăмака çĕнĕ кин пек каçăрăлса ларчĕ йалканаш канцелари пÿлĕмне.

Пуçлăх Николайĕва кăмака вăрлакан, темеле. Унăн ансăр çамки çине çак кăмака историне çырса хумала, урине „Капкăн"-па хĕстермеле. **Татмăш.**

# „Çезон“ йенчен пăхсан.

Пăхма, конешнă, пур йенчен те, темле те пăхма пулат. Кама мĕн килĕшет, мĕн çав тери санăн куçусене илĕртет, çав йенчен йапалана хытăрах пăхатăн. Вăхăт йалан пĕр пулмаст, шухăш та пĕр йапала çинчен вĕренпе кăкарнă пек кăкарăнса тăмаст. Анчах, калăпăр, есĕ пĕр-пĕр йапалапа интересленсе ĕçлетĕн, йе пăхатăн—çав хушăрах сан пуçна таçтан шухăш пырса кĕрет те, тума тытăннă ĕçе те пантарса йарат. Кун пек çынна сапаланчăк, тăрлавсăр, тĕккеленсе, хыçкаланса ĕçлекен сÿтĕк çын теççĕ пирĕн тăрăхра. Сÿтĕкĕн пур ĕçĕ те сÿрĕк пулса сÿтĕлсех пыма пуçласан, вăл хăйĕн сÿтĕклĕхне пытарма тăрăшат. Вара вăл тĕрлĕрен условисем, причинсем, сăлтавсем, майсем шутласа кăларса хăйне тавра карта карталама тăрăшат. Карти тытăнмасан тарăхса хирĕçет.

Ак, манăн пĕрре çавăн пек сÿтĕк-сĕтĕрĕнчĕк етемпе тĕл пулса калаçмала пулчĕ. Малтан пăхсан та, кайран çавăрăнса урлăш-тăршĕне пăхсан та, пăхма тек лайăх çынах, темеле. Ытти йĕркелĕ етемсен пекех, конешнă, хăйĕн йачĕ те, амăшĕн йачĕ те пулнах ĕнтĕ унăн. Хушамачĕ „Жуков“ терĕç мана. Пурăнма вăл Хĕрлĕчутай районĕнче Карăкçырми йалĕнче, йалканаш çекретарĕ пулса ĕçлесе пурнат. Тĕл пулсанах епĕ ăна:—Ну, Жуков, илте!—терĕм те Жуковран вăл мĕн ĕçпе пурăннине ыйтма пуçларăм. Йалканашĕнче çекретарте ĕçленине пĕлсен:

— А-ха, мана чи кирлĕ етем пулатăн,—тесе пукан çине ларма ыйтрăм.

— Ну, пожалăстă, есĕ мана нумай ан тытса тăр. Манăн хаљ калас пулат, сывлама та, хыç хыçма та вăхăт çук,—теме пуçăнчĕ манăн Жуков.

— Тăхта-ха, манăн санпа ытларах калаçмала... Мĕншĕн-ха сирĕн шкул патĕнче вутă çук... Ма кÿртерместĕр... Вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ, шкулне хутса ăшăтмала, ачасене вĕри апат çитерме апат пĕçермеле.

— Пĕлетпĕр, хамăрах чухлатпăр,—терĕ те манăн Жуков пĕрре пуçне хыçрĕ, сăмахсене шăлчĕ те пукан çинчен çĕкленме пăхрĕ.

— Тăхта, каласа пар... Çавна пĕлмех килтĕм,—тесе Жукова тăратмарăм.

— Ес вăрахăн калаç... Манăн, понимайĕшлĕ, нерва... Тата çитменни çине хаљ кăшт ĕçкеленĕ хушăра... Понимайăш, хĕрĕнчĕклĕ... Понимайĕш... пирĕн мĕн туса çитермеле...

— Вăл-ку мана кирлĕ мар... Кала, мĕншĕн шкулăн вутă çук, санпа епĕ шут туса калаçма вăхăт тупаймастăп.

— А-а, калама астуман,—терĕ те Жуков ура çине тăчĕ.—Есĕ кала, хăçан топитĕлни çезон, хăçан çветитĕлни çезон... Хаљ топиттĕлни-çветитĕлни çезон мар, ăçтан есĕ мантан вутă ыйтма пултаратăн.Топитĕлни-çветитĕлни çезон пĕтĕм Совет союзĕшĕн... Топитĕлнă-çветитĕлни çезон Октăбĕрте пуçланат. Хаљ укса пуçтармала, кĕрхи çĕртме тумала, авăн çапмала, тырă пухмала... Мĕн вутпа калаçмала.

— Тăхта, шкула вутă-шанкă кÿрсе парасси çинчен сире пĕрре мар каланă, ма кÿртерместĕр?

— Раз закон. Топитĕлни-çветитĕлни октăбĕр çитмен...

— Жукăв, есĕр вутă йалта тесе тăтăр-ха вĕт,—тесе учитĕлницă Жукăв çине тархасланă пек пăхрĕ.

— Паратпăр, тăхта... Манăн срочнă ĕç,—терĕ те тухса кайрĕ.

Çентăбĕр ирте пуçларĕ, октăберти сивĕсем вĕре пуçларĕç, анчах Жукăвсен „топителни-çветитĕлни çезонсем“ хăçан çитĕç-ши... Ачасене вĕри апат çитерес, ăшă пÿлĕмре канлĕ вĕрентесси хăçан пулĕ-ши?

— Çук... Вăл-ку ĕçсем сÿтек Жукăвсенчен пулас çук. Жукăвсене сут умне илсе пырса тăратсан, Карăкçырминче те „çветитĕлни-топитĕлни çезонсем“ йенчĕн пăхмасăрах вутă-шанкă пулĕччĕ. Сÿтĕк Жукăвăн нервисене лăплантарма рецепт çырса ăна ваљљи емел йантăласах пулат.

Жукăвăн чирĕ питĕ хăрушă чир. Унăн нервисем пăсăлса „çветитĕлни-топитĕлни „йатлă чирпе чирлесе, йалан ÿсĕрĕлсе çÿрекен пулнă...

Лайăх çынах сÿтĕлсе аташакан пулнă.

**Калай.**

# Вĕсен критикĕ

Пирĕн Йалта Михей мучи критиклес тĕлĕшпе чи малта пыракан çын. Ĕçлĕ вырăнта ларакан никам та унăн кăмăлне кайаймаст. Мĕн каламали пур ĕнтĕ ĕçлĕ вырăнта лараканнисем çинчен. Вĕсене мар, ĕвеле те тиркесе тăкат. Кун тĕтрелĕ пулсассăн, Михей чышкипе пĕлĕт çинеле йунаса илет те, хĕвеле пăçăрлантарма тытăнат:

— Хă... хĕвел теççĕ хăйне. Çутатма пултăн-тăк çутат, сукин ывăлĕ, ан кахаллан. Вăл пур—пытанса ларнă. Михей мучийа нимĕнпе те йурама çук. Кăçал колхозниксем трактăрпа уй ĕçне турĕç. Çитĕнÿ ĕнтĕ ку. Пичĕсенче хаваслăх çунакан колхозниксем çине пăхрĕ те Михей, çĕреле лач сурчĕ.

— Мĕн пирки хавасланатăр-ха, ухмахсем, терĕ.—Тупнă çитĕнÿ—трактăр. Хамăр патшалăх чиккин леш йенче такçанах, трактăрсемпе кăна мар, йероплансемпе суха тăваççĕ тен. Есĕр...

Електрицă паракан машин илсе килчĕç колхоза. Колхозниксен пÿрчĕсене çутă парсан çав тери савăнăç пулчĕ, йалкор та вăл савăнăçа хут çине ÿкерсе парийас çук. Михей каллех критиклемели вырăн тупат.

Çути пурне пур та, анчах лампинчен пирус тивретме май çук-çке. Ун вуттипе пĕчĕк хуран йашка та пĕçерсе çийеймĕн.

Критиклет те, критиклет. Радио сассине илтсен, хăлхана сиенлĕ вăл, громкоговоритĕлтен хăлха парăппанĕ теççи çав, параппан хăлхи теççи çав, чĕтренсе пăсăлат, теççĕ.

Вулав çуртне сурмали савăт лартрĕç. Ачасем, значĕт, урайне ан сурчăр, сурассин неграмотнăçне тĕп туса хуччĕр, терĕç.

Унта та Михей хăйĕн критикипе пырса çапăнат. Йешĕли, тет, тĕрлĕ вырăна пĕрер йе икшер хут

çурнашанах нимӗнле сийен те пулмаст, капла пӗр савата сурсан, унтан тӗрлӗрен микробсем пӗрлешсе вай илсе етем ӑшне хавартрах кӗрсе кайма пултараççӗ.

Ĕçлӗ çынсем хӑшсем унран хараканах пулса карӗç. Мӗнле те пулсан собрани йе пӗр-пӗр доклад-йе отчот пулсан, пурте Михей тухса хӑйсен ӗçӗсене çапса хурасса кӗтессӗ. Чанах та пит хытӑ çапат вара собранисенче Михей хӑй тухса каланӑ чух:

— Мӗншӗн хаçатсем хулам хут çине çапнисене илетӗр, пирус çаварма та май çук ун пек хаçатпа. Мӗншӗн самогон тума чараççӗ, мӗншӗн налог пуринчен те, хӑшӗсен тӳлесси килмест пулсассӑн та, илеççӗ. Мӗншӗн партире таракан çынсем ернипех ӑвакан çамара чармаççӗ. Мӗншӗн йалсовет хамар ырма шывне çуллахи шарах вахатсенче чакма таракан приказ калармаст. Мӗншӗн ..

Талакӗпех ним чаранмасар критиклесе тама та пултарӗ вал. Итлерӗç, итлерӗç те ӑна хӑшӗсем, капла калаçса илчӗç хӑйсем хушшинче:

— Ав, вал çын! Пурне те сисет. Çӗр айӗнчи виçҫухрамрине те курат пулӗ вал. Унан суккар текен ырши те курма пултарат пулмала.

Вара ӑна хӑшӗсем халах хушшинче ӗçлеме суйлас текенвисем пулчӗç. Хӑй катартнӑ çитменлӗхсене пурне те йусатар терӗç, кун çинчен систерме икӗ ывтан делегаци йачӗç ун патне. Йанӑ çынсем пӳрум патне çитнӗ те сасартаках чаранса танӑ. Пӳрт-е вайла тавлашу пынине илтнӗ вӗсен халхисем. Сассисем тарах, пӗри Михей, тет, теприсем—йалти икӗ пысак кулак, тата тепри Саватти пуп, тет.

— Мана çав тери тарашнӑшӑн партак хушса парастар пулсан, прахатап ак вӗсен ӗçӗсене критиклесе пыма,—тесе варçат тет пирӗн Михей.

# Кӳренекен лаша

Евграфӑв ӳкерчӗкӗ.

Хыймала-касси (Шуп. р.) йалсоветӗнче ӗçлекенсем ӗçкӗ айне путнӑ.



**Лавçӑ:**—Ах, ку çынна турттарса кайма та намас. Вылӑх пек ӗçсе тултарнӑ.

**Лаши:**—Ан кӳрентер-ха мана, хуçам! Нихçан та епӗ ун пек ӗçсе курман.

---

— Мӗн усси пулчӗ санӑн критикунтан. Пур пӗрех колхоз ӳссе пырат,—тенӗ тет Сидар кулак,—Есӗ тиркетӗн, тиркетӗн, вӗсем хӑйсеннех таваççӗ.

Сана пани шыва йанӑ пекех ним уса та кӳмерӗ,—тенӗ иккемӗш кулакӗ, манарах сасӑли.

Çӑпата.

# Пирӗн хӑшпӗр кадарсем




**Вӗрениччӗн:**—Вӗренме кӗресчӗ! Йал тӗттӗм. Вӗренсе тухсан ӗçлеме йалах кайасчӗ.

**Вӗренсе тухсан:**—Йал тӗттӗм. Унта пуранма кичӗм. Хуларах йуласчӗ.

# Хăшĕ нăмайрах

Чылай колхозсенче радиоприйоминксем ĕçлемесĕрех лараççĕ. Çыхăну аппарачĕ вĕсене ĕçлеттермеле тăвасси çинчен шухăшламасть.



Радиопа йурлаканзампе калаçкансем çавăн чухлĕ.



Вĕсене итлекенсем çакăн чухлĕ. Хăшĕ нумайрах?


Сдано в производство 20-VII—34 г.
Подписано к печати 28-XI—34 г.
Секретарь и вып. редактор **И. ИЛЛАРИОНОВ**

**Ответ. редактор: ГУР. ТИТОВ.**

Ст. ф б. 200×280. Об'ем 1 п. л. Издательство газ. „Капкăн"

Чувашглавлит № 1012. Типогр. № 1 Чувашгиза г. Чебоксары, ул. Чувашская, 15. Закав № 1226. Тираж 1600 экз.